Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи ҫу уйӑхӗн 5-мӗшӗнчепе тухать

19 (8085) № * Юн кун, 2013 ҫулхи пуш (март) уйӑхӗн 20-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

## Кубок хастаррисен аллинче



*Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Муркашри вӑтам шкулти учительсен команди иртнӗ шӑмат кун район администрацийӗн пуҫлӑхӗн кубокне ҫӗнсе илессипе йӗркеленӗ эстафетӑра палӑрчӗ. Учительсен командисем хушшинче тупӑшса вӗсем ҫӗнтерӳҫӗ пулчӗҫ, кубока тивӗҫрӗҫ.*

*Йӗлтӗрҫӗсен ӑйӑлана кӗнӗ ҫак эстафета кӑҫалхипе районта 15 хут иртрӗ. Ӑмӑрту пирки тӗплӗнрех ҫитес номерте вуласа пӗлме пултаратӑр.*

**Н. НИКОЛАЕВА сӑн ӳкерчӗкӗ.**

## Патшалӑх услугисем 69

**Республикӑра**

Ҫак вӑхӑта Чӑваш Енре пурӑнакансем Раҫҫей Федерацийӗн патшалӑх тата муниципаллӑ услугӑсен электронлӑ мелӗпе 69 услугӑпа усӑ курма пултараҫҫӗ. Ҫавна валли Порталта регистрациленмелле. Код илнӗ хыҫҫӑн харпӑр хӑйӗн кабинетӗнче ӗҫлеме пуҫӑнмалла.

Электронлӑ услугӑсемпе ытларах Шупашкар хули тивӗҫтерет – 27. Чӑваш Ен Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министерствин услугисем 18. Сӑмахран, Портал урлӑ медицина ӗҫне-хӗлне пурнӑҫлама лицензи илме, аптекӑсене электронлӑ рецептсем ҫырса ярса пама, ачана уйӑхсерен паракан пособие йӗркелеме, ачана усрава илме кандидата тӑма, пурӑнмалли ҫурт-йӗре пурӑнмалла маррисем шутне кӗртме е пурӑнмалли мар ҫурта пурӑнмалли ҫурт шутне кӗртме ирӗк илме май пур. Тата ытти услугӑсемпе те усӑ курма пулать.

Ҫавна палӑртса хӑвармалла. Хальхи вӑхӑтра Чӑваш Енре услугӑсене электронлӑ шая куҫарассипе III-IV тапхӑр пурнӑҫа кӗрет. Унччен хи икӗ тапхӑрӗ Пӗрлехи порталта услугӑсен, документсен бланкӗсем пирки сведенисем вырнаҫтарассипе ҫыхӑннӑ пулнӑ. Виҫҫӗмӗш тапхӑрта Портал урлӑ ыйтакансене электронлӑ майпа документсемпе тивӗҫтерессине йӗркелеме май килнӗ.

Хальхи вӑхӑтра патшалӑх услугисен Пӗрлехи порталӗнче республикӑра пурӑнакан 16 пин ытла ҫынна регистрациленӗ. Федераллӑ услугӑсене вӗсем 30 пин ытла ыйтса илнӗ. Регионсенчи патшалӑх тата муниципаллӑ услугӑсен тӗлӗшпе 2 пине яхӑн ыйту пулнӑ. Ытларах чухне граждансем Раҫҫей Федерацийӗн гражданинӗн, ют ҫӗршывӑн ҫӗнӗ йышши тата кивӗ йышши паспортне илессипе, водитель удостоверенине илессипе, пурӑнакан вырӑнта регистраци тӑрассипе, Раҫҫей Федерацийӗн Пенси фончӗнчен, штрафсем, налуксем, техосмотр, автомашинӑна регистрацилессипе парӑмсем пурри е ҫукки пирки информаци илессипе услугӑсемпе усӑ кураҫҫӗ.

**ЧР Информаци политикин тата массӑллӑ коммуникацисен министерстви.**

**Райадминистрацире**

## Хисеп грамотипе наградӑланӑ

Район администрацийӗн 2013 ҫулхи февралӗн 11-мӗшӗнчи 103 № йышӑнӑвӗпе районти физкультурӑпа спорта аталантарассине пысӑк тӳпе хывнӑшӑн тата нумай ҫул ӑнӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн ҫаксене район администрацийӗн Хисеп грамотипе наградӑланӑ:

– Муркашри ачасемпе ҫамрӑксен В. Егорова ячӗпе хисепленекен спорт шкулӗн тренер-преподавательне **Игорь Валерьевич СМИРНОВА**;

– Муркашри ачасемпе ҫамрӑксен В. Егорова ячӗпе хисепленекен спорт шкулӗн инструктор-методистне **Михаил Николаевич СИДОРОВА**;

– Муркашри ачасемпе ҫамрӑксен В. Егорова ячӗпе хисепленекен спорт шкулӗн директорӗн вӗрентӳпе воспитани енӗпе ӗҫлекен ҫумне **Александр Николаевич ПЕТРОВА**;

– Муркашри ачасемпе ҫамрӑксен В. Егорова ячӗпе хисепленекен спорт шкулӗн тӗп бухгалтерне **Ольга Васильевна СИДЮШКИНӐНА**.

Ҫитӗнекен ӑрӑва пӗлӳ тата воспитани парассинче ӑнӑҫусем тунӑшӑн тата нумай ҫул тухӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн – Нискассинчи тӗпӗмӗшле пӗлӳ паракан вӑтам шкулти истори учительне **Тамара Андреевна ВАСИЛЬЕВӐНА**.

**Йыхрав**

## Граждансене йышӑнаҫҫӗ

Мартӑн 22-мӗшӗнче район администрацийӗнче **потребитель прависене хӳтӗлессипе ҫыхӑннӑ ыйтусемпе** йышӑну кунӗ пулать. Халӑха Чӑваш Республикин Роспотребнадзор управленийӗн ответлӑ специалисчӗ С. Михайлова 10 сехетре йышӑнать.

Асӑннӑ тӗл пулу Тавар туянакансен прависене хӳтӗлемелли кун шайӗнче иртет. Кӑҫал вӑл «Паян потребительсене суд тӗрӗслӗхӗпе тивӗҫтерер» девизпа пулать. Хӑвӑра кӑсӑклантаракан ыйтусемпе район администрацийӗн 310, 311, 314 пӳлӗмӗсене пыма е 63-2-45 номерпе шӑнкӑравлама пултаратӑр.

Ҫавӑн пекех ҫак кун 15 сехетре Муркашри ял тӑрӑхӗсем хушшинчи библиотекӑра **ЖКХ сферинчи ыйтусемпе** халӑха район прокурорӗн пулӑшуҫи А. Чернов, «Пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе коммуналлӑ хуҫалӑхӑн ертсе пыракан компани» чикӗллӗ яваплӑхлӑ обществӑн ертӳҫи Н. Любимов, Муркашри МУП ЖКХ ертӳҫи С. Тимофеев йышӑнаҫҫӗ. Тӗплӗнрех 62-6-36 номерпе ыйтса пӗлмелле.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## РАЙОНТА: ӗнер, паян, ыран

### Информаци кунӗ

Паян республикӑри кашни районтах пӗрлехи информаци кунӗ иртет. Муркаш енре те ӗҫ ушкӑнӗсем Муркаш, Мӑн Сӗнтӗр, Юнкӑ, Уйкас Янасал ял тӑрӑхӗсенчи ӗҫ коллективӗсенче вӑй хуракансемпе курса калаҫаҫҫӗ.

Пӗрлехи информаци кунӗн тӗп теми – ҫур акине хатӗрленсе ирттерессинче ӗҫ тӑвакан влаҫ органӗсем тата вырӑнти хӑй тытӑмлӑх органӗсем умӗнчи задачӑсем. Кунпа пӗрлех Раҫҫей Федерацийӗнчи пенси тытӑмӗн 2030 ҫулччченхи аталанӑвӗ пирки те, коммуналлӑ услугӑсен кӑҫалхи тарифӗсем пирки те сӑмах хускатаҫҫӗ. Информаци кунӗ вӑхӑтӗнче граждансене йышӑнасси-не те пӑхса хунӑ.

### «Шурӑ ромашка»

Пӗтӗм тӗнчери туберкулеза хирӗҫ кӗрешмелли куна (мартӑн 24-мӗшне) халалланӑ "Шурӑ ромашка" акци пирӗн районта та пуҫланчӗ. Ӑна ҫулсеренех иртте-реҫҫӗ. Акци ҫынсене туберкулез хӑрушӑ чир пулнине тата ӑна тупса палӑртассинче флюорографи тӗрӗслевӗ витӗмлӗ пулнине аса илтерет.

Акци апрелӗн 20-мӗшӗччен иртет. Асӑннӑ тапхӑрта пурне те Муркашри тӗп больницӑра, Мӑн Сӗнтӗрти больницӑра флюорографи кабинечӗсенче тӳлевсӗр йышӑнаҫҫӗ. Унта кашниех ҫитме тӑрӑшӑр.

### Малалла – Шупашкара

Иртнӗ эрнере районти чи пултаруллӑ та хастар пикесем «Муркаш пики – 2013» конкурсра тупӑшрӗҫ. Конкурса пурӗ ҫичӗ пике хутшӑннӑ. «Муркаш пики – 2013» ята Муркашри вӑтам шкулта вӗренекен Екатерина Козлова тивӗҫнӗ. Екатерина мартӑн 23-мӗшӗнче иртекен «Чӑваш пики – 2013» республика конкурсӗнче Муркаш чысне хӳтӗлӗ.

### «Халӑх» ятне хӳтӗленӗ

Районти халӑх художество пултарулӑх коллективӗсем «халӑх» ятне хӳтӗлерӗҫ. Вӗсен ӑсталӑхне республика шайӗнчи сумлӑ жюри хакланӑ. Халӑх коллективӗсем куракансем умне тухнӑ репертуара ҫӗнӗ постановкӑсем те кӗртнӗ. Профессионаллӑ жюри вара сцена ҫинчи ӑсталӑхпа пӗрлех коллективсен тӑнӑҫ аталанӑвне те тишкернӗ: республикӑри фестиваль-конкурссенче мӗнле хутшӑнние шута илнӗ. Районти халӑх художество пултарулӑх коллективӗсем хӑйсен ятне чыслӑн хӳтӗлеме пултарнӑ.

**Н. НИКОЛАЕВА хатӗрленӗ.**

**Пенси фондӗнчен хыпарлаҫҫӗ**

## «Манӑн пулас пенси»

Ҫак ятпа республикӑра вӗренекенсем хушшинче олимпиада иртет. Олимпиадӑна йӗркелекенсем РФ Пенси фончӗн республикӑри уйрӑмӗ, ЧР Вӗрентӳ тата ҫамрӑксен политикин министерстви тата патшалӑхӑн шутланман пенси фончӗсем.

Олимпиадӑна аслӑ классенче вӗренекенсем тата професси паракан училищӗсенче, колледжсемпе техникумсенче пӗлӳ пухакансем хутшӑнаҫҫӗ. Ӑмӑрту икӗ тапхӑрпа иртет. Пӗрремӗш тапхӑрта участниксен «Пулас пенсие мӗнле пысӑклатмалла» темӑпа электронлӑ презентаци хатӗрлемелле те апрелӗн 5-мӗшӗччен вырӑнти Пенси фончӗн уйрӑмне ярса памалла. Пенси службин специалисчӗсем вӗренӳ органӗсен представителӗсемпе пӗрле район (хула) шайӗнче мала тухнисене палӑртаҫҫӗ.

Иккӗмӗш тапхӑрта финалистсен пенси законодательствине пӗлнине кӑтартмалла пулать. Пенси фончӗн республикӑри уйрӑмӗнче компьютер мелӗпе тест ирттереҫҫӗ. Олимпиада ҫӗнтерӳҫисене мӗн чухлӗ балл пухнӑ тӑрӑх палӑртаҫҫӗ.

Ҫӗнтерӳҫсене палӑртнӑ чухне дипломсем, вӗсене хатӗрленӗ педагогсене Тав ҫырӑвӗсем параҫҫӗ. Пур финалистсем валли те олимпиадӑн генеральнӑй партнерӗсем – патшалӑхӑн шутланман «КИТ» пенси фончӗн Шупашкарти филиалӗ тата Раҫҫей Перекет банкӗ парнесем хатӗрлеҫҫӗ. Ҫӗнтерӳҫсене ҫавӑн пекех жюри шутне кӗнӗ олимпиада партнерӗсем – патшалӑхӑн шутланман пенси фончӗсен филиалӗсем «Промагрофонд», «Росгосстрах», «Большой пенсионный фонд» парнесем параҫҫӗ.

– Олимпиада тӗллевӗ – вӗренекенсене пенси тӗлӗшпе тарӑнрах пӗлӳ парасси, хӑйсен пулас пенсине йӗркелеме тӗллев ҫуратасси, – палӑртать РФ Пенси фончӗн Чӑваш Республикинчи уйрӑмӗн управляющийӗ Роза Кондратьева.

**РФ Пенси фончӗн районти управленийӗ.**

# Ыйтусем – куллен тимлĕх ыйтаканнисем

**Район администрацийĕн кунĕсем**

Район администрацийĕн вырăнти ял тăрăхĕсенчи кунĕсене ирттерессин хĕрӳ тапхăрĕ пырать. Графикпа килĕшӳллĕн çак шайри ĕç мартăн 13-мĕшĕнче Москакасси ял тăрăхĕнче иртрĕ. Ĕçлĕ çул çӳреве район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн ертӳçи В. Никитин, райадминистрацин информаципе тивĕçтерессин пай пуçлăхĕ В. Лаврентьев, выльăх чирĕсемпе кĕрешекен районти станци врачĕ Г. Спаскин тухрĕç.

Чи малтанах ĕç ушкăнĕ халăха ял тăрăхĕн администрацийĕнче тĕрлĕ ыйтупа йышăнчĕ. Чуна ыраттаракан çакăн пек ыйтусем пулчĕç – çул-йĕр тăвасси, юсасси; шывпа тивĕçтересси; йăлари хытă каяша пуçтарасси тата тиесе турхасси; нумай ачаллă çемьесене çĕр парасси.

Çынсен ыйтăвĕсене тишкернĕ хыççăн ял тăрăхĕн активĕ Москакассинчи ИКЦра пухăнчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В. Никитин районăн иртнĕ çулхи социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн ĕçĕ-хĕлĕпе тата район территорийĕнчи инфраструктура проекчĕсене пурнăçлассипе, çавăн пекех ытти ĕçе вăя кĕртессипе паллаштарчĕ, тĕрлĕ çитменлĕх тĕлĕшпе кашни отрасль çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Асăннă ял тăрăхĕн ĕç-хĕлне ытти ял тăрăхĕсен кăтартăвĕсемпе танлаштарчĕ. Паллах, кунта акционерсен «Шупашкарти «Сеспель» хупă обществин ырă витĕмне палăртмалла. Москакассинче вырнаçнă пысăк калăпăшлă предприяти бюджет тытăмне пысăк тӳпе хывать, ĕç вырăнĕпе тивĕçтерет.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ А. Матросов пухăннисем умĕнче çулталăкра пурнăçланă ĕç-хĕл çинче чарăнчĕ, малашнехи тĕллевпе паллаштарчĕ. Çуркуннене кĕтĕмĕр ĕнтĕ, юр ирĕлнĕçемĕн вара тавралăха ку таранччен пухăннă, тĕрĕсрех каласан, хамăр пăрахнă тасамарлăх илемсĕрлетĕ. Çакăнпа кĕрешесси – хăйне майлă пысăк йывăрлăх, мĕншĕн тесен кашнин ăнланулăхĕ тĕрлĕрен. Çавăнпах та пулĕ йăлари хытă каяша маларах палăртнă вырăна пухасси, ăна тиесе тухасси пур çĕрте те кăткăс ыйтусенчен пĕри, унсăр пуçне çак ĕçĕн тӳлев шайне йĕркелесси те. Тен иккĕмĕш хут усă курмалли чĕр тавар йышăнассине тивĕçлĕ шайра йĕркелеменни те витĕм кӳрет пулĕ.

– Кунта кашни çыннăн пуçарулăхĕ, ăнланулăхĕ кирлĕ. Пирĕн тавралăх – пирĕн тăван кĕтес, апла пулсан хăтлă та тирпейлĕ кил-çуртра пурăнма та меллĕ. Çавăнпа та йăлари каяша йĕркене пăхăнса пуçтарар тата ăна кирлĕ çĕре ăсатар, хуçалăхри мĕн пур тасамарлăхпа тавралăха варалар мар, – терĕ А. Матросов.

Ял тăрăхĕн бюджечĕ чухăн мар, çавна май кунта пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем те сахал мар пурнăçланаççĕ. Çĕнĕ урамсене çутăпа тивĕçтерессипе тимлеççĕ. Вăрманкас Хачăк, Ахмане ялĕсенчи çул проекчĕсене тăвассипе ĕçлеççĕ. Урамсене хăтлăх кĕртесси – кулленхи тимлĕхре. Москакасси ялĕнчи Молодежная тата Зеленая урамсенчи картишсенче юсав ĕçĕсене вĕçлеме палăртнă.

Москакассинчи ИКЦ ĕçĕ-хĕлĕпе унăн ертӳçи Г. Голубева паллаштарчĕ. Асăннă центрта реконструкци ĕçĕсем пурнăçланă хыççăн çĕнĕ сăн-сăпат кĕнĕ, кунта халĕ хăтлă. Ялти çынсен канăвне, пушă вăхăтне тивĕçлĕ шайра йĕркелессишĕн кунта чылай ĕç пурнăçлаççĕ. Çавăн пекех пултарулăх ушкăнĕсем те ялсене концертпа тухса çӳреççĕ.

Урамра чупса çӳрекен йытăсем тăтăшах калаçтараççĕ, кунта чи малтанах вĕсен хуçисен йĕркесĕрлĕхĕ пирки асăнмалла. Енчен те вăл «маншăн ик айкки те тăвайкки» тет пулсан, ăна явап тыттарни кирлех. Штраф укçи тӳлесе курсан тен урăхла шухăшлĕç вĕсен хуçисем. Тăвата ураллă тус вара пур енлĕ хăрушлăх кăларса тăрать, ача-пăча урамра выляса çӳрет, çавăн пекех урнин чирĕ пурри те асăрханусăррах пулма хистет.

Урнин чирĕ тата сыснан африка чуми – хăрушшисен шутĕнче. Чылайăшĕ астăвать пулĕ пĕрремĕш чир район территорийĕнче те пулнине. Çавăн пекех африка чуми те пирĕнтен инçех мар регионсенче алхаснине шута илнĕ.

– Енчен те ветеринари специалисчĕсем сирĕн хуçалăхри чĕр чуна вăл е ку чиртен вакцина тума чĕнсен, айккинче ан юлăр. Çак ĕçсене йăлтах сыхлăх тĕлĕшпе пурнăçлатпăр, – терĕ Москакассинчи ветеринари участокĕн ертӳçи Н. Пинарина пурне те асăрханулă та тимлĕ пулма ыйтса.

Çӳлерех асăннă ĕçсене йĕркелессинче ял старостин витĕмлĕ сăмахĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хăш чухне вара вăл хăй темиçе çыншăн тимлет.

– Çапах та ял старостисене хавхалантарсан тĕрĕс пулнă пулĕччĕ, – терĕ Рыккакасси ялĕн старости Т. Кондратьева хăйĕн ыйтăвне çӳллĕрех шая çитерме сĕнсе.

Москакасси ял тăрăхĕн территорийĕ пур енлĕ илĕртӳллĕ те меллĕ вырăн шутланать. Апла пулсан кунти çĕр лаптăкĕн пĕлтерĕшĕ те питĕ пысăк, федераллă çул-йĕр хĕрринче вырнаçнăран вара – пушшех те. Çавна май çĕр ыйтăвĕ хĕрӳ калаçу пуçарчĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

# Вырăнти халăхран та чылай килет

***Ял тăрăхĕсенче район администрацийĕн кунĕсем малалла пыраççĕ. Тĕл пулусем хăйсемех çакна кăтартса параççĕ. Вырăнти влаç представителĕсем халăхпа çакăн пек вырăна тухса чуна хумхантаракан ыйтусене сӳтсе явни питĕ кирлĕ. «Пирĕн пĕр-пĕрне итлемелле, вăл е ку ыйтăва пĕр-пĕринпе калаçса татса памалла», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Ильинка ял тăрăхĕнче пулса иртнĕ район администрацийĕн кунĕнче. Районăн иртнĕ çулхи социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕ çинче чарăннă май вăл район бюджетне çулталăк тăршшĕпе 100 млн. тенкĕ ытла ӳстерме май килни çинчен асăнчĕ, кăçал вăхăта сая ямасăр татса памалли виçĕ тĕллеве палăртрĕ. Вĕсем вара çаксем: хуçисемшĕн кирлĕ мар шутланакан пай çĕрĕсене ял тăрăхĕсем çине куçармалла, ял тăрăхĕсенчи хуçасăр шутланакан шыв башнисем, гидротехника сооруженийĕсем ял тăрăхĕсен харпăрлăхĕ пулса тăмалла тата бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстермелле.***

Чи малтанах тĕл пулура Ильинка ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Перцев ял тăрăхĕнче иртнĕ çул туса ирттернĕ ĕçсем çинчен каласа пачĕ. Иртнĕ çул Мемеккассинче шыв башнине çĕннипе улăштарма пултарчĕç. Хунтăкассипе Вăрманкасси ялĕсенчи çăлсене юсама кăшăлсем илчĕç. Ялсене тирпейилем кĕртес тĕлĕшпе те сахал мар тимлерĕç. Пурĕ 20 кубла метр çӳпçапа çĕнĕ полигона илсе кайни унта е кунта выртакан тĕрлĕрен ăпăр-тапăр куписен йышне самаях чакарма май пачĕ.

Вырăнта çирĕппĕн аталанакан ял хуçалăх предприятийĕ çукки, предпринимательсен йышĕ чакни вара вырăнти бюджет «енчĕкне» хулăнлатас ĕçре ура хурсах пырать. Çитес вăхăтра Хунтăкассинче магазин уçăлмалла. Ростислав Николаевич ку енĕпе хуçасăр объектсене ял тăрăхĕсен харпăрлăхĕ çине куçарса вĕсене арендăна пани, çĕре арендăна панин укçине пуçтарассипе активлăн ĕçлемеллине палăртрĕ.

Юрий Викентьевич çавăн пекех çĕр ыйтăвĕ çинче тĕплĕн чарăнчĕ. Пурĕ кунта 1503 пай çĕрĕ. Вĕсенчен 456-шĕ хуçисен харпăрлăхне куçнă ĕнтĕ. Кирлĕ мар тесе шутланакан пай çĕрĕсем вара 686. Вĕсенчен 30-не район сучĕн йышăнăвĕпе ял тăрăхĕн харпăрлăхне куçарнă. Тепĕр 138 пай çĕрĕ тĕлĕшпе документсене суда тăратнă. Ку ĕçе тепĕр 500 пай çĕрĕ тĕлĕшпе туса ирттермелле. 4 çын вара пай çĕрĕсем кирлĕ мар тесе йышăнчĕ.

Ку ял тăрăхĕнче пурăнакансене хумхантаракан ыйтусем вара чăннипех те нумай иккен. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн отчечĕ хыççăн залран пĕр ыйту хыççăн тепри пулчĕ. Вĕсем вара тĕрлĕрен. Ял хушшинчи çулсене уçасси пирки те. «Ял тăрăхĕн территорийĕнче 3 пĕлтерĕшлĕ çул пулнине ял çыннисем туймалла мар. Вĕсене йĕркеллĕ уçса тăмалла. Ку енĕпе подрядчиксенчен ял тăрăхĕн çирĕп ыйтмалла», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев.

– Магазин патĕнчи автобус чарăнмалли вырăна мĕншĕн уçмаççĕ?

– Мартăн 8-мĕшĕнче пушар машинисене шыв тултарма анма пĕве патне юра хыртарман. Мĕншĕн?

Çак икĕ ыйту пирки залра икĕ тĕрлĕ шухăш пулчĕ. Пĕрисем çулсене йĕркеллĕ уçтарса тăнине палăртаççĕ, теприсен шухăшĕсем урăхла. Пĕр ыйтупах çакăн пек темиçе шухăш пулни, çавăн пекех пĕр ял ĕнисем тепĕр ял витĕр çул çийĕн утса тухса кайни пĕр-пĕрне тарăхтарни çакăн пек шухăш патне илсе çитерет: пĕр-пĕрне ăнланас тесе сиксе тухнă ыйтусене çийĕнчех сӳтсе явнине, пĕр-пĕрне ăнланма, пĕр-пĕринпе çывăхрах пулма тăрăшнине нимĕн те çитмест иккен. Ку енĕпе тĕл пулура депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В. Кожанов çав тери вырăнлă шухăш каларĕ. Хăй хутшăннипе туса ирттернĕ мероприятисем çинче чарăннă май çакна палăртрĕ:

– Эп мероприяти интереслĕ ирттĕр тесе чупкалани çеç çителĕксĕр. Сирĕн унта пурин те активлă хутшăнмалла, айккинчен сăнаса çеç пăхса тăмалла мар, – терĕ Валерий Иванович.

Çак сăмахсен пĕлтерĕшне пирĕнтен кашнин ăша хывмалла пулĕ. Халĕ вара каялла ыйтусем патне таврăнар.

Пушарпа çыхăннă ыйтăва район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев тепĕр хут тишкерме шантарчĕ, чăннипех те çул хупă пулнă-и пĕве патне, мĕншĕн юнашарти Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕн пушар машини пушар пулнă вырăна час килмен? Ростислав Николаевич çавăн пекех кăçал пушар хăрушсăрлăхĕ енĕпе районта пĕрлехи система туса хурассине, çакă лару-тăрăва лайăх енне улăштарасси çине ырă витĕм кӳрессине палăртрĕ.

Тепĕр ыйту – Куçкăн ялĕн масарĕ тулса кайни, ăна пысăклатмалли. Ку ыйтăва Ростислав Николаевич татса парасси çинчен каларĕ.

Ял урамĕсенче хуçасăр йытăсем чупса çӳреççĕ тенĕрен, хамăр йытăсемшĕн хамăрăн та яваплă пулмалла. Ростислав Николаевич çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартрĕ. Районти административлă комиссин ларăвĕнче çак енĕпе йĕркене административлă майпа пăснăшăн Ильинка ял тăрăхĕнчи 11 çынна штраф тӳлеттернĕ.

– Шупашкарти шыв хранилищин шайне 68,0 метра çитерессипе район панă сĕнӳсене шута илнĕ-и?

– Халăхпа пĕрле сӳтсе явнă хыççăн тăратнă сĕнӳсене тӳрех шута илмен. Район администрацийĕ çине тăнипе Муркашсен шухăшне каярахпа йăлтах шута илнĕ.

Муркашран Тренккăна çӳрекен автобуса Ильинкăна çитиччен çӳреттерес ыйтăва та, çăва тухиччен ял тăрăхĕнче кĕтӳ çӳретмелли вырăн ăçта пулассипе çыхăннă ыйтăва та татса пама шантарчĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ.

Ильинка тăрăхĕсене районта шыва кĕмелли вырăнсем пуррипе çукки те кăсăклантарать. Ростислав Николаевич ку енĕпе шыва кĕмелли тапхăр пуçланиччен шыва кĕме ятарлă вырăнсем уйăрнине, вĕсене водолазсем тĕпченине палăртрĕ.

– Эпир обществăлла организаци йĕркелесшĕн. Район администрацийĕ пире пулăшать-ши ку ĕçре?

– Чи малтанах обществăлла организацие мĕн тĕллевпе йĕркеленине, унăн задачисемпе паллашмалла. Енчен те вĕсем халăх пурнăçне лайăхлатассипе, район аталанăвĕ çине лайăх витĕм кӳреççĕ пулсан, пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлеме пулать. Йăлтах саккунпа килĕшӳллĕн пулса пымалла.

Тĕл пулура çĕр ыйтăвĕсем те сахал мар пулчĕç. 60 соттăй çĕре харпăрлăха куçарма пулать-и?

– Çук, пулмасть. Ăна 49 çула арендăна параççĕ. Çав вăхăт иртсен хăвăр е сирĕн ачăрсем ăна тепĕр çакăн чухлĕ вăхăта тăсма пултараççĕ. Анчах та çакна астăвăр. Çĕре арендăна илни çинчен калакан килĕшĕве регпалатăра регистрацилемелле. Унсăрăн çав çĕр ирĕклĕ шутланать, ăна эсир çухатма пултаратăр.

– Пирĕн тăрăхра тем вăрăмăш карта тытса лартакан хуçалăхсем нумайланма пуçларĕç. Хамăр та пĕлместпĕр, те унта качака фермы уçаççĕ, те тата урăх ферма.

Ку ыйту çине хуравланă май район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев çавна палăртрĕ: акă мĕн патне илсе пырать аякран килнĕ çынсене темиçе пин тенкĕпе çынсем хăйсен пай çĕрĕсене сутса яни. «10 пинпе кăна сутнăччĕ», – пулчĕ залран сасă.

Пĕр пай çĕрне 5 – 10 пинпе сутăн илекенсем ăна темиçе çĕр пинпе ярăнтараççĕ. Юлашкинчен вара хамăр ял тăрăхĕнче камсем мĕнле объект тунине те пĕлмелле мар лару-тăру патне пырса тухатпăр. Ростислав Николаевич паллаoriginal.

Çак шухăшпа пирĕнтен кашниех килĕшет пулĕ. Пирĕн çавна асра тытса куллен тимлемелле.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Саламлатпăр**

Муркашри тĕп больницăра ĕçлекен хисеплĕ тухтăра – **Юрий Александрович КУЗНЕЦОВ** врач хирурга 50 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Тумхахсăр кун-çул, çирĕп сывлăх, телей, вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Сирĕн пархатарлă ĕçĕрте яланах ăнăçусем пулччăр.

**Ăшă салампа: район больницин администрацийĕпе коллективĕ тата профсоюз комитечĕ.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Елизавета Петровна ДОНСКОВĂНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Тавах сана, çĕр çинчи чи хаклă çыннăмăр, эс пурришĕн, пире пурнăç парнеленĕшĕн, пире, ачусене, çуратса тĕрĕс-тĕкел пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнăшăн. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек таппа тăракан вăй-хал, иксĕлми телей, савăнăç сунатпăр. Пурнăçу тулăх пултăр, сĕтелӳ апат-çимĕçрен ан татăлтăр, сăн-питре савăнăçлă кулă çиçсе тăтăр.

**Саламлаканĕсем: хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, мăнукĕсем тата мĕн пур çывăх тăванĕ.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăра – Шаптак Муркаш ялĕнче пурăнакан **Зоя Филипповна ГОЛУБЕВĂНА** 80 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн, мĕн пур ăшă туйăмпа саламлатпăр. Эпир санпа мухтанатпăр, юрататпăр, хисеплесе сан умăнта пуç таятпăр. Эсĕ пирĕншĕн яланах ырă тĕслĕхре. Сана юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр.

**Пысăк салампа: юратнă мăшăрĕ, 2 ывăлĕ, 2 хĕрĕ, кинĕсем, кĕрӳшĕсем, 9 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

**Конкурссем**

## Сывă пурнăç йĕркишĕн

Муркашри вăтам шкулта апрелĕн 4-мĕшĕнче районти çамрăксен агитбригадисен конкурсĕ иртмелле. Ăна район администрацийĕн вĕрентӳ тата çамрăксен политикин пайĕ (тел.: 63-4-60) хамăрăн сывлăха тата çав вăхăтрах çут çанталăка упрама хистес тĕллевпе йĕркелет. Конкурса районти предприятисемпе организацисен, учрежденисен, ял тăрăхĕсен тата шкулсен командисем (6 çынран ытла мар) хутшăнма пултараççĕ.

Маларах вара районта тепĕр конкурс пулса иртет – «Атте, анне тата эпĕ – спортпа туслă çемье». Унăн 1-мĕш тапхăрĕ мартăн 25-мĕшĕччен пырать. Çамрăк çемьесем хăйсем çинчен каласа паракан электронлă майпа пурнăçланă ĕçсене (презентаци, видеоролик тата ытти те) molod_morg@mail.ru адреспа ярса памалла е район администрацийĕнчи 325 пӳлĕме çитерсе памалла. Иккĕмĕш тапхăрĕнче, мартăн 27-мĕшĕнче, жюри суйласа илнĕ ĕçсене хӳтĕлессине йĕркелеççĕ. Унта çамрăк çемьесен 12 çул тултарман ачипе пĕрле пулмалла.

## Информатикăпа – олимпиада

Мартăн 23-мĕшĕнче Москакассинчи вăтам шкулта районти шкулсенче 10 – 11 классенче вĕренекенсен информатика олимпиади иртет. Ăна ачасене усăллă пултăр тесе патшалăхăн пĕтĕмĕшле экзаменĕсен билечĕсем тăрăх йĕркелеççĕ. Олимпиада Муркашра вырнаçнă «Компьютеры» салон (ертӳçи Н. Еропанов) пулăшнипе иртет. Çавăнпах çĕнтерӳçĕсене хаклă парнесем кĕтеççĕ: 1-мĕш вырăна тухакана – планшет, 2-мĕш вырăна – принтер, 3-мĕш вырăна – сканер.

**Йĕркелӳ комитечĕ.**

# Аслă типĕ пуçланчĕ

Акă Аслă типĕ çитрĕ, çулталăк хушшинче тунă çылăхсене каçарттармалли вăхăт килчĕ. Кăçал Аслă типĕ мартăн 18-мĕшĕнчен пуçласа майăн 4-мĕшĕччен пырать. Майăн 5-мĕшĕ – Мăнкун праçникĕ.

Çак типĕре сĕт-çу, аш-какай, çăмарта çиме юрамасть. Тип çăва та шăмат кунпа вырсарни кун кăна усă курма юрать. Апрелĕн 7-мĕшĕнче (Турă Амăшне ырă хыпар пĕлтернĕ кун) тата апрелĕн 28-мĕшĕнче (Кăчăкă праçникĕн кунĕ) пулă çиме юрать. Паллах, çак типĕ йĕрки сывă çынсем валли. Чирлĕ çынсене, ачасене, вăйсăр çынсене çак типпе çăмăллăн тытма юрать.

Типĕ тытни апат-çимĕç çинче анчах пулмалла мар. Пирĕн хамăр ăшăмăрти усал шухăшсене пусармалла, чĕлхе-çăвара ытлашши калаçасран чармалла, усал тăвас ĕçе пăрахмалла. Çавăн пек типĕ тытнин усси пулĕ, чуна усă кӳрĕ.

Аслă типĕре пирĕн хамăр çылăхсене каçарттарса чуна тасатас пулать. Ӳкĕнес тесен пирĕн Турă умĕнче айăпа туйса илмелле, çав хамăр тунă усал ĕçсенчен йĕрĕнмелле, çылăха кĕрессрен хамăра чармалли шухăш кĕртмелле. Тата çылăхсене Турă каçартăр тесен пирĕн хамăра кӳрентернĕ, çиллентернĕ, усал тунă çынсене каçарас пулать, вĕсемпе килĕшес пулать.

Тăвансем, типĕ тытса çылăхсене каçарттарса Мăнкун праçникне таса чунпа кĕтсе илер.

**Йӳçкасси чиркĕвĕн настоятелĕ Сергий атте.**

Спорт

# Республикăра палăрнă

Мартăн 8–10-мĕшĕсенче Шупашкарти 2 номерлĕ ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен шкулĕнче республикăри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕсем хушшинче мала тухассишĕн ăмăрту иртнĕ. Унта пирĕн районти ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕ – «Сывлăх» ФСК чысне Ярапайкассинчи уйрăм спортсменĕсем хӳтĕленĕ. Э. Гордеев тренер-преподаватель патĕнче ăсталăха туптакан çамрăк йĕлтĕрçĕсем аслисен ӳсĕмĕнчи хутăш эстафетăра 3-мĕш вырăн йышănма пултарнă. Ăмăртăва хутшăннă Диана Черновăпа Светлана Соколова уйрăм чупусенче палăрса иккĕшĕ те 3 степень дипломсене тивĕçнĕ.

Çак ăмăртура виçĕ кунхи кăтартусемпе ачасемпе çамрăксен В. Егорова ячĕллĕ Муркашри спорт шкулĕн команди вара пĕтĕмĕшле 2-мĕш вырăна тухма пултарнă. И. Смирнов, В. Кузьмин, Н. Скворцов тата Н. Степанов тренер-преподавательсем ертсе пыракан йĕлтĕрçĕсем кĕçĕннисен ӳсĕмĕнчи эстафетăра та, вăтам ӳсĕмрисен эстафетинче те иккĕмĕш пулнă.

**Хамăр инф.**

# Хăрушсăрлăх – асăрхаттару урлă

ГИБДД пĕлтерет

Пирĕн çĕр-шывра çул-йĕр çамрăк инспекторĕсен юхăмне йĕркеленĕренпе кăçал 40 çул çитет. Муркаш районĕнче те шкул ачисем хушшинче кун пек инспекторсем пур. Вĕсем çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн правилисене ăса хывнă май йĕркелĕхшĕн тăрăшаççĕ: тантăшĕсене, кĕçĕнреххисене те çул-йĕр çинче йĕркеллĕ тытма хистеççĕ. Ку ĕçе ача сачĕсенче те йĕркеленĕ темелле. Воспитательсем çул-йĕр çинче ачасен хăйсене мĕнле тытмаллине тăтăшах вĕрентеççĕ, ятарлă конкурссемпе вăйăсем те ирттереççĕ.

Пирĕн районти ГИБДД инспекторĕсем вара вăй çитнĕ таран вĕрентӳ учрежденийĕсене тухса ăнлантару калаçăвĕсем ирттереççĕ, тĕрлĕ тĕл пулусене хутшăнма тăрăшаççĕ. Калаçмалли, асăрхаттармалли, ăнлантармалли сахал мар. Маларах асăннă датăна халалласа вара республикипех мартăн 5-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 31-мĕшĕччен ятарлă профилактика мероприятийĕсем ирттерме планланă. Вĕсен шутĕнче уçă уроксем, социаллă пĕлтерĕшлĕ акцисем, ачасен çул-йĕр çинчи хăрушсăрлăхĕн эрни тата ытти те. Пĕтĕм Раççейри «Эпĕ – хамăн çĕр-шывăн гражданинĕ!» конкурс çак анлă ĕçсен тапхăрĕн хăйне май пĕтĕмлетĕвĕ пулĕ. Унта пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вĕренӳ учрежденийĕсенчи çамрăк инспекторсен отрячĕсем хутшăнма пултараççĕ.

Çул çинчи йĕркелĕхе тытса тăрас тесе эпир ятарлă асăрхаттару рейчĕсем те ирттеретпĕр. Акă март уйăхĕнче кăна пĕршер кун пынă «Автобус», «Ачасем», «Чукун çул урлă каçăвĕ» операцисем пулчĕç. Умра – «Ура мар водитель» тата çуран çӳрекенсене çул-йĕр çинчи правилăсем пирки асăрхаттаракан акцисем.

**С. ИВАНОВ,**
**ГИБДД уйрăмĕн районти пуçлăхĕ.**

Акци

# Наркотик – тăшман

Наркотикăн саккунсăр çаврăнăшне хирĕç кĕрешме полицие районта пурăнакан кашни çын пулăшма пултарать. Çак эрнере пуçланнă Пĕтĕм Раççейри «Вилĕме ăçта сутнине пĕлтер» акци мартăн 29-мĕшĕччен пырать.

**Шалти ĕçсен министерствин пирĕн районти пайне 62-6-67, 62-8-79, 62-1-59 номерсемпе «шанчăклăх телефонĕ» çине шăнкăравласа наркотик хатĕрлени пирки, ăна йышăнакансем пирки пĕлтерме пултаратăр.** Çапла майпа эпир хамăрăн хăрушсăрлăхшăн та, ачасен малашлăхĕшĕн те, общество йĕркелĕхĕшĕн те витĕмлĕ ĕç тăватпăр.

**ШĔМ-ĕн районти пайĕ.**

Аукцион

## ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО АУКЦИОНА

1. Организатор аукциона:

Наименование: администрация Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики

Адрес: 429534, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юськасы, ул. Центральная, 58

Контактные лица: Кузьмин А.Н., глава администрации Юськасинского с/пос.

Контактный тел.: 8 (83541) 60-5-72, 60-7-51

e-mail: http://gov.cap.ru/main.asp?govid=432

2. Вид аукциона: открытый
3. Договоры аренды заключаются сроком на 5 лет.
4. Предмет аукциона:

– право заключения договора аренды по объектам недвижимого имущества «Комплекс водоснабжения» находящегося в муниципальной собственности Юськасинского сельского поселения, расположенного по адресу: 429534, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юськасы, ул. Центральная, 58, сроком на 5 лет. Дополнительную информацию о дате и времени осмотра имущества можно получить у организатора торгов.

5. Основание: постановление администрации Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики № 4 от 23.01.2013 г., № 18 от 15.03.2013 г.
6. Начальная (стартовая аукционная) стоимость годовой арендной платы 191 700 (Сто девяносто одна тысяча семьсот) руб.
7. Сумма задатка – 10% от начальной (стартовой аукционной) стоимости годовой арендной платы.
8. Шаг аукциона – 5% от начальной (стартовой аукционной) стоимости годовой арендной платы.
9. Требования к оформлению заявок на участие в аукционе: заявка на участие в аукционе должна быть подана в письменной форме.
10. Дата начала подачи заявок на участие в аукционе:

с 20.03.2013 г. в рабочие дни с 08.00 до 16.00 перерыв на обед 12.00 до 13.00 (по московскому времени) до даты окончания срока подачи заявок.

11. Дата окончания срока подачи заявок на участие в аукционе: 17.04.2013 г. в 16 часов 00 минут (время московское).
12. Место подачи заявок на участие в аукционе (адрес):

Заявки на участие в аукционе подаются по адресу: 429534, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юськасы, ул. Центральная, 58.

13. Срок рассмотрения заявок на участие в аукционе: 18.04.2013 г. с 10 часов 00 минут (время московское) до 15 часов 00 минут.
14. Место, дата и время проведения аукциона:

Аукционная комиссия проводит аукцион 19.04.2013 г. в 9 часов 00 минут (время московское) по адресу: 429534, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Юськасы, ул. Центральная, 58.

15. Перечень документов, представляемых заявителем для участия в аукционе:

Платежный документ (и его копия), подтверждающий внесение заявителем задатка. Задаток перечисляется на реквизиты: получатель платежа – финансовый отдел администрации Моргаушского района Чувашской Республики (администрация Юськасинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики), ИНН 2112389371, р/с 40302810575025013032 в отделении № 8613 Сбербанка России г. Чебоксары, БИК 049706609, к/с 30101810300000000609 л/с 05123ЧМН012 в финансовом отделе администрации Моргаушского района Чувашской Республики. В платежном поручении необходимо указать назначение платежа (задаток на участие в аукционе), дату аукциона, номер лота. Задаток вносится единым платежом.

Задаток возвращается всем претендентам аукциона, в соответствии с условиями договора о задатке, кроме победителя, в течение 3-х банковских дней со дня подписания протокола о результатах аукциона.

Выписка из Единого государственного реестра юридических лиц – для юридических лиц, выписка из Единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей – для индивидуальных предпринимателей, копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц.

Копии документов, удостоверяющих личность (для иных физических лиц).

Копии учредительных документов заявителя (для юридических лиц);

Документ, подтверждающий полномочия лица на осуществление действий от имени заявителя – юридического лица (копия решения о назначении или об избрании либо приказа о назначении физического лица на должность, в соответствии с которым такое физическое лицо обладает правом действовать от имени заявителя без доверенности (далее – руководитель).

Заявление об отсутствии решения о ликвидации заявителя – юридического лица, об отсутствии решения арбитражного суда о признании заявителя – юридического лица, индивидуального предпринимателя банкротом и об открытии конкурсного производства, об отсутствии решения о приостановлении деятельности заявителя в порядке, предусмотренном Кодексом Российской Федерации об административных правонарушениях;

Заявителем предоставляется опись документов в 2-х экземплярах, один из которых с указанием даты и времени (часы, минуты) приема заявки, удостоверенные подписью уполномоченного лица организатора аукциона, возвращается заявителю.

Организатор аукциона вправе отказаться от проведения аукциона не позднее чем за три дня до даты окончания срока подачи заявок на участие в аукционе.

16. Требования к участникам аукциона:

В аукционе на право заключения договора аренды по объектам недвижимого имущества «Комплекс водоснабжения» может принять участие любое юридическое лицо независимо от организационно-правовой формы, формы собственности, места нахождения и места происхождения капитала или любое физическое лицо, в том числе индивидуальный предприниматель, претендующее на заключение договора, соответствующие требованиям, предусмотренным документацией об аукционе, и подавшее заявку в установленные сроки на участие в аукционе.

Победителем аукциона признается лицо, предложившее наиболее высокую цену годового размера арендной платы. По итогам аукциона оформляется протокол, который является основанием для заключения договора аренды. Договора аренды заключаются в срок не позднее 5 рабочих дней со дня подписания протокола.

## ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ ОТКРЫТОГО КОНКУРСА

1. Наименование конкурса – открытый конкурс на право обслуживания внутрирайонных маршрутов регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом, организуемых сверх муниципального заказа в Моргаушском районе Чувашской Республики.
2. Форма торгов – открытый конкурс.
3. Конкурс проводит: администрация Моргаушского района Чувашской Республики.

Место нахождения: Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6.

Почтовый адрес: 429530, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6.

Адрес электронный почты: ukc@morgau.cap.ru.

Конкурсная документация на сайте администрации района: http://gov.cap.ru/main.asp?govid=71

4. Предмет конкурса: Право обслуживания внутрирайонных маршрутов регулярных пассажирских перевозок автомобильным транспортом, организуемых сверх муниципального заказа в Моргаушском районе по следующим внутрирайонным автобусным маршрутам:

Лот № 1 по маршруту «Моргауши–Шептаки» – 11 км (ежедневно):

– отправление из с. Моргауши: 8 час. 30 мин.; 14 час. 20 мин;

– отправление из д. Шептаки: 8 час. 50 мин.; 14 час. 40 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 2 по маршруту «Моргауши–Мадики» – 24,2 км (ежеденевно):

– отправление из с. Моргауши: 10 час. 10 мин.;13 час. 05 мин; 14 час. 10 мин.; 18 час. 01 мин;

– отправление из д. Мадики: 7 час. 05 мин; 11 час. 00 мин; 13 час. 30 мин.; 14 час. 45 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 3 по маршруту «Моргауши–Юськасы – (ч/з Н.Панклеи)» – 19 км (ежедневно):

отправление из с. Моргауши: 7 час. 45 мин.; 9 час. 30 мин; 11 час. 40 мин.; 13 час. 30 мин; 15 час. 30 мин.; 18 час. 30 мин.;

– отправление из с. Юськасы 7 час. 10 мин; 8 час. 15 мин.; 10 час. 05 мин; 12 час. 10 мин.; 14 час. 10 мин.; 16 час. 00 мин.; 19 час. 00 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 4 по маршруту «Моргауши–Васькино» – 19,8 км (ежедневно):

отправление из с. Моргауши: 7 час. 45 мин.; 9 час. 00 мин; 11 час.10 мин.; 15 час. 10 мин.; 17 час. 20 мин; 18 час. 35 мин.;

– отправление из д. Васькино: 7 час. 15 мин; 8 час. 20 мин.; 9 час. 40 мин; 11 час. 40 мин.; 15 час. 40 мин.; 17 час. 45 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 5 по маршруту «Моргауши–Тиуши – 18,3 км (ежедневно):

– отправление из с. Моргауши: 13 час. 01 мин.; 17 час. 26 мин.;

– отправление из с. Тиуши: 6 час. 50 мин; 13 час. 35 мин.; 18 час. 00 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 6 по маршруту «Моргауши–Хорной» – 5 км (с понедельника по пятницу):

– отправление из с. Моргауши: 6 час. 55 мин.; 17 час. 20 мин.

– отправление из д. Хорной: 7 час. 20 мин; 17 час. 30 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 7 по маршруту «Моргауши–Тренькино–Ильинка» – 30,6 км (с понедельника по пятницу):

– отправление из с. Моргауши: 7 час. 31 мин.; 10 час. 01 мин; 12 час. 25 мин.; 16 час. 02 мин.;

– отправление из с. Ильинка: 8 час. 10 мин; 10 час. 40 мин.; 13 час. 05 мин; 16 час. 40 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 8 по маршруту «Моргауши–Б.Карачкино» – 30км (с понедельника по пятницу):

– отправление из с. Моргауши: 6 час. 40 мин.; 11 час. 30 мин; 16 час. 31 мин.;

– отправление из д. Б.Карачкино: 7 час. 20 мин; 12 час. 10 мин.; 17 час. 05 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 9 по маршруту «Моргауши–Кашмаши» – 6 км (с понедельника по пятницу):

– отправление из с. Моргауши: 7 час. 10 мин.; 17 час. 20 мин;

– отправление из д. Кашмаши: 7 час. 20 мин; 17 час. 30 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

Лот № 10 по маршруту «Моргауши–Тойгильдино»– 10 км (с понедельника по пятницу):

– отправление из с. Моргауши: 6 час. 30 мин.; 9 час. 30 мин; 12 час. 40 мин.;17 час. 25 мин.;

– отправление из с. Тойгильдино: 6 час. 45 мин; 9 час. 40 мин.; 12 час. 55 мин.; 17 час. 35 мин.

Требование к подвижному составу: 2 автобуса, в том числе 1 автобус резервный.

5. Порядок и место получения конкурсной документации:

Конкурсная документация предоставляется по письменному заявлению в адрес организатора конкурса по адресу: 429530, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 206.

Плата за предоставление конкурсной документации не взимается.

6. Время и место проведения конкурса: 10-00 час. 19 апреля 2013 года, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Мира, д. 6, каб. 206.

Заявки подаются в рабочие дни с 8-00 час. до 17-00 час. (обед с 12 до 13 час.) с 20 марта 2013 года и до 17-00 час.18 апреля 2013 года.

7. Показатели и порядок оценки квалификации участников конкурса:

Показатели и порядок оценки квалификации участников указаны в «Информационной карте конкурса».

## Пĕлтерӳсем. Объявления

ООО «ВИКТОРИЯ»
* Ведение бухгалтерского учета, составление отчетности, декларации 3НДФЛ.
* Представительство в судах всех инстанций.
* Составление договоров, претензий, исковых заявлений.
* Сопровождение сделок с недвижимостью, в т. ч. земельных участков.
* Сопровождение при лицензировании, оценке имущества.
* Регистрация, ликвидация ЮЛ, ИП, внесение изменений.
* Кадровое делопроизводство.
* Бизнес-консультации.
Адрес: с. Моргауши, ул. Мира, д.6, офис 119. Тел.: 62-4-43.; г. Чебоксары, ул. Т. Кривова, д. 4 а. Тел.: 44-64-48.
E-mai:l vika09-2010@mail.ru, сайт: www.victoria-ooo.ru



ТЕПЛИЦЫ от производителя из сотового поликарбоната 3х6, 3х8 и т. д. Телефоны: 8-917-651-00-76 8-927-858-28-79. 7-11.

ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА Brusbox от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок. Замер и доставка бесплатно. Закажите зимой окна в рассрочку, установим весной. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а. Тел.: 8-937-955-33-00, 8-917-662-71-64. 10-10.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-10.

Магазин «ОТДЕЛОЧНИК» реализует: утеплитель «Технониколь» – 530 руб.; гипсокартон – 190 руб.; фанера влагостойкая 9 мм (1,25х2,50) – 555 руб.; профнастил оцинк. 2 м – 400 руб., профнастил крашеный 2 м – 480 руб.; сухие смеси, цемент – 180 руб.; сайдинг; двери, поликарбонат. Тел.: 8-903-322-59-69, 8-961-348-66-36. 3-10.

НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ
Тел.: 8-927-667-40-92. 10-30.




Дорогие жители села Моргауши и Моргаушского района!

Открывшийся в здании Дома быта на 2-ом этаже отдел по ремонту одежды принимает заказы на ремонт одежды любой сложности: юбок, брюк, пальто, трикотажных изделий. Цены индивидуальны, в зависимости от работы. График работы: с 8-00 до 17-00 час. (суббота и воскресенье – выходные). 2-3.

* * *

Продаю черную козу с козленком. Тел.: 8-905-340-68-50.

Продаю кирпичный дом (62 кв. м.) с надворными постройками, земля – 44 сот, асфальтированная дорога, в д. Карманкасы. Цена договорная. Тел.: 8-903-065-58-66. Настя. 1-2.

* * *

Октябрь уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли хура-шурă ĕне сутатăп. Тел.: 8-937-388-97-13.

* * *

Покупаем пух-перо новое, а также старые подушки, перины. С выездом. Тел.: 8-963-121-75-92. Ирина. 2-2.

# ОСТОРОЖНО – ГАЗ!

Уважаемые граждане!

С наступлением весны происходит интенсивное таяние снега, возможны размывы и подвижки грунта, оползни на склонах оврагов, затопление территорий, находящихся в зоне воздействия паводковых вод. Всё это может привести к возникновению аварийных ситуаций на газораспределительных сетях и внутренних устройствах газоснабжения.

Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз» просит жителей Моргаушского района в целях обеспечения безопасности и предотвращения возможных аварий и чрезвычайных ситуаций на газовых сетях проявлять повышенную бдительность. При обнаружении повреждений и деформаций газопроводов, размыва грунта на их трассах необходимо срочно сообщить в газовую службу по телефону 04 или 60224.

Не допускайте пользования газовыми приборами при отсутствии или нарушении тяги в дымовых и вентиляционных каналах, при наличии запаха газа, при неисправностях газовых приборов или их систем автоматики. Не допускайте самовольную установку, замену и ремонт газоиспользующего оборудования, монтаж и демонтаж газопроводов.

При появлении запаха газа в квартире, подъезде, подвале, во дворе дома, на улице необходимо немедленно позвонить в аварийно-диспетчерскую службу филиала «Моргаушимежрайгаз» по телефону 04. Не дожидаясь приезда аварийной бригады, принять необходимые меры безопасности – проветрить помещение, не допускать использование открытого огня, не включать и не выключать электроприборы, не пользоваться электрозвонками, не курить. Предупредить об этом окружающих.

Организациям по обслуживанию жилого фонда, собственникам газифицированных зданий необходимо обеспечить выполнение требований «Правил и норм технической эксплуатации жилищного фонда» и других нормативных документов, для чего:

- проводить работы по очистке крыш зданий от снега и сосулек, падение которых может угрожать надземным и фасадным газопроводам;
- содержать в техническом исправном состоянии вентиляционные каналы, дымоходы и их оголовки;
- не загромождать места расположения газовых колодцев, коверов подземных газопроводов, очищать от снега и льда крышки люков колодцев смежных с газопроводами инженерных сетей;
- обеспечить систематические проверки отсутствия запаха газа в технических подпольях и подвалах жилых домов;
- своевременно заключать договоры со специализированными организациями на техническое обслуживание и ремонт внутренних устройств газоснабжения.

Соблюдение мер предосторожности позволит обеспечить безопасность.

**Филиал «Моргаушимежрайгаз» ОАО «Чувашсетьгаз»**

Лицензия Ростехнадзора №ВП-00-011658 (ЖКС) от 11.06.2010г.

Продаю новые ульи 16-рамочные с магазинной надставкой; сани конные; косилку сегментную для мотоблока «Агро». Тел.: 8-927-848-42-11.

Продаю пресс-подборщик тюковый, польский, «Сипма К-224/1, грабли навесные, косилку 1,65м и 1,85м, польские. Тел.: 8-905-341-01-86. 1-2.

## Прогноз погоды

| | среда 20 марта | | | | четверг 21 марта | | | | пятница 22 марта | | | | суббота 23 марта | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | -1 | -3 | 0 | -2 | -4 | -5 | -2 | -5 | -9 | -12 | -8 | -10 | -12 | -14 | -10 | -11 |
| Давление мм | 740 | 743 | 744 | 745 | 743 | 742 | 741 | 743 | 745 | 748 | 749 | 750 | 751 | 753 | 752 | 752 |
| Влажность % | 86 | 87 | 67 | 76 | 82 | 89 | 77 | 76 | 79 | 81 | 58 | 59 | 69 | 80 | 54 | 62 |
| Ветер м/сек | 1 | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 | 6 | 6 | 5 | 6 | 4 | 3 | 3 | 3 | 4 | 4 |
| | Ю | С | В | В | В | С-В | С-В | С | С | С | С | С | С | С | С-В | С-В |
| Солнце восход / заход | | 06:53 | 19:07 | | | 06:50 | 19:09 | | | 06:47 | 19:11 | | | 06:45 | 19:13 | |
| Луна восход / заход | | 11:21 | 03:20 | | | 12:22 | 03:56 | | | 13:29 | 04:26 | | | 14:39 | 04:51 | |

Куплю земельный участок в Моргаушском районе до 60 тыс. руб. Продаю а/м ВАЗ-2115 2003 года выпуска, серебристый, а/м ВАЗ-217230 (Приора), 2009 года выпуска, цвет Сочи. Тел.: 8-903-389-23-03.

* * *

Продаю кур-молодок. Возможна доставка. Тел.: 8-909-300-08-18. 2-2.

* * *

Уйăх çурăри хура-шурă тĕслĕ вăкăр сутатăп. Тел.: 8-919-653-40-62.

* * *

Икĕ ĕнерен пĕрне сутатпăр. Тел.: 8-965-682-19-18, 8-905-199-79-49.

* * *

Продается сено в тюках. Тел.: 60-6-10 или 8-927-850-49-58.

Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин Муркаш районĕн халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрĕ тата халăха социаллă хӳтлĕх паракан пайĕ кунта ĕçлекен социаллă ĕçченĕн Е.Н. Грачевăн амăшĕ

**Евдокия Дмитриевна СТЕПАНОВА**

вилсе кайнă пирки таръннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Район администрацийĕн экономикăпа АПК аталанăвĕн пайĕ тата профсоюз райкомĕ Суворов яч. хис. хуçалăхăн тĕп зоотехникĕн Г. Васильевăн амăшĕ

**Елизавета Павловна ТОЛСТОВА**

нумай чирлесе выртнă хыççăн вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Администрация и профком БУ «Моргаушская» ЦРБ выражают глубокое соболезнование заместителю главного врача Толстову В.В., врачу общей практики Толстовой В.В. по поводу безвременной кончины матери

**ТОЛСТОВОЙ Елизаветы Павловны.**

Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат
УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви
ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» Чăваш Республикин хай тытăмлă учрежденийĕ.

Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.
АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru
Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Макарова Р.А.
Пичете панă 19.03.2013 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4891.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.